28-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945 ИЮЛЬ 7 ШАМАТКУН 130 (6881) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) Обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗн, ЧАССР Верховный Совечӗн тата Шупашкар хула Совечӗн хаҫачӗ

Аслӑ СТАЛИНА
Чӑваш республикинчи ӗҫҫыннисенчен

Юратнӑ Тӑван аттемӗр Иосиф Виссарионович!

Хамӑрӑн республика 25 ҫул тултарнӑ кун Сире, хаклӑ Иосиф Виссарионович, пӗтӗм халӑхпа чӗререн салам яратпӑр, Сире «Ҫӗнтерӳ» орденӗпе наградӑланӑ май, Совет Союзӗн Геройӗ ятне тата чи аслӑ ҫар званийӗ—Совет Союзӗн Генералиссимусӗ ятне панӑ май хӗрӳллӗн саламлатпӑр, нумай ҫулсем пурӑнма ырӑ сывлӑх сунатпӑр.

Ҫак саламлӑ сӑмаха эпир хамӑрӑн чи хӗрӳллӗ шухӑш-кӑмӑлсене, пирӗн чӗресене ӑшӑтса тӑракан чи таса туйӑмсене хутӑмӑр. Пире ирӗклӗ те телейлӗ пурӑнӑҫ панӑшӑн Сире эпир, ывӑлӗсем хӑйсен юратнӑ ашшӗне тав тунӑ пек, тав тӑватпӑр.

Пирӗн республика пысӑках мар. Анчах сирӗншӗн, Иосиф Виссарионович, пирӗн чӗресенче пысӑк юрату ҫунса тӑрать! Хӑйӗн паянхи савӑнӑҫлӑ та тулӑх пурӑнӑҫӗшӗн чӑваш халӑхӗ большевиксен аслӑ партине, Ленин—Сталин партине тав тӑвать. Ӗлӗкхи саманара пирӗн халӑх пурӑнӑҫӗ, тӗп сакайӗнчи пек, асаплӑ та хӗн-хурлӑ пулнӑ. Чӑваш халӑхӗн чи лайӑх патриотла туйӑмӗсене патша Российине тытса пыра[кан]..ем, капиталистсем, помещиксем, кулаксем ирсӗррӗн таптанӑ. Пирӗн халӑх пусмӑрлӑхпа чуралӑха хирӗҫ пӗр хут кӑна мар кӗрешӗве тухнӑ. Разинпа Пугачев дружинисене хутшӑнса, вӑл телей ҫулне шыранӑ. Анчах кашнинчех халӑх вӑйне патша йыттисем тискеррӗн пусара-пусара лартнӑ.

Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ революци кӑна чӑваш халӑхне ӗмӗрлӗхех пусмӑртан хӑтарчӗ те Совет Ҫӗршывӗнчи тӑванла халӑхсен туслӑ йышӗпе пӗрле ҫутӑ пурӑнӑҫ патне илсе кайрӗ. Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ революци чӑваш халӑхӗн ҫӗнӗ, ылттӑн ӗмӗрӗн пуҫламӑшӗ пулса тӑчӗ.

25 ҫул каярах аслӑ Ленин Чӑвашсен Автономиллӗ Облаҫне тӑвасси ҫинчен калакан декрета алӑ пусса ҫирӗплетрӗ. Кайрантарах вара пирӗн область Чӑвашсен Автономиллӗ Советлӑ Социализмлӑ Республики пулса тӑчӗ.

Аслӑ вырӑс халӑхӗ, Ленинла-Сталинла наци политикине ҫирӗппӗн пурӑнӑҫа кӗртсе пырса, хӑй тавра ҫӗршыври мӗнпур халӑхсене пӗтӗҫтерчӗ; Российӑри ӗлӗкхи саманара кая юлнӑ вӑйсӑр халӑхсене, вӑл шутра чӑваш халӑхне те, вырӑс халӑхӗ ӗмӗрхи нушалӑха пӗтерме, вӗсене хӑйсен государственноҫне туса хума, хӑйсен культурине аталантарса чечеклентерме пулӑшрӗ. Ленин—Сталин партийӗ ертсе пынипе, тӑванла халӑхсен туслӑ йышӗ, иртнӗ вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи йывӑрлӑхсене ӑнӑҫлӑн пӗтерсе, социализмлӑ наступлени пуҫласа яма вӑй-хӑват пухрӗ. Чӑваш республикинчи ӗҫҫыннисем Эсир, Сталин юлташ, кӑтартса панӑ ҫулпа пӗр пӑркаланмасӑр малалла утса пычӗҫ, буржуаллӑ-националистла хӳрешкесен ултавлӑ сӑмахӗсене парӑнмарӗҫ, пирӗн аслӑ ҫӗршыври халӑхсен туслӑхне пӑсмарӗҫ.

Совет влаҫӗн ҫулӗсенче, большевиксен партийӗ ертсе пынипе, аслӑ вырӑс халӑхӗ тӑванла пулӑшнипе, чӑваш ҫӗршывӗнче социализмлӑ ҫутӑ пурӑнӑҫ тӑвас ӗҫ анлӑн сарӑлса кайрӗ, ҫав телейлӗ те савӑнӑҫлӑ пурӑнӑҫа Сталинла Конституци хӗвелӗ ҫутатса тӑма тытӑнчӗ.

Чӑваш республикинчи ӗҫхресченӗсем колхозсене пӗрлешме тытӑнсан, Эсир ӑслӑ канаш панипе пирӗн пата Горький хулинчи рабочисем килчӗҫ, вӗсем пирӗн хресченсене пӗрлешсе ӗҫлеме вӗрентсе пычӗҫ. Вырӑс рабочи класӗ янӑ ҫав ҫынсен ячӗсене чӑваш халӑхӗ ырӑ кӑмӑллӑн асра тытса усрать. Вӗсен ячӗсене чысласа, пирӗн нумай колхозсем паянхи кун та мухтавлӑ вырӑс рабочийӗсене аса илтерекен ятсене тытса тӑраҫҫӗ.

Эсир чӗннипе чӑваш халӑхӗ ҫӗршывра социализмлӑ индустри никӗсне хывас ӗҫе хастарлӑн хутшӑнчӗ. Чӑваш республикинчен ҫамрӑксем темиҫе пиншер ҫын Горький хулинчи Молотов ячӗпе тӑракан автозавода тунӑ ҫӗре кайрӗҫ. Чӑваш республикинче те хӗрӳллӗ строительство ӗҫӗ пуҫланчӗ. Аслӑ Тӑван ҫӗршыв пире фабрикӑсемпе заводсем тума укҫа-тенкӗ, станоксемпе машинӑсем, инженерсем ҫителӗклӗ парса тӑчӗ. Ҫӗмӗрле сӗм вӑрманӗсенче йывӑҫ пуянлӑхӗсенчен ҫӗршыв валли усӑллӑ япаласем тӑвакан пысӑк предприятисен корпусӗсем ҫитӗнсе ларчӗҫ. Атӑл ҫыранӗ ҫинче, тӳлек Куславкка варӗнче йывӑҫ каскалакан пысӑк комбинат ӳссе ҫитӗнчӗ. Вӗсем хыҫҫӑн вагонсем юсакан заводпа хими завочӗсем, пир-авӑр фабрикисем, электропромышленность завочӗсем тата ытти тӗрлӗ оборона предприятийӗсем ҫуралчӗҫ. Эпир кивӗ фабрикӑсемпе заводсене ҫӗнетсе аслӑлатрӑмӑр, промышленноҫа вӑй парса тӑракан энергетика никӗсне сартӑмӑр, ӗмӗр усӑ курмасӑр выртнӑ торф пуянлӑхӗсене кӑларма тытӑнтӑмӑр. Ҫулйӗрсене ҫӗнӗрен туса тата юсаса лайӑхлатрӑмӑр. Канашпа Шупашкар хушшинчи чугун ҫул пирӗн столицӑна пӗтӗм ҫӗршыври чугун ҫулсемпе ҫыхӑнтарчӗ, ҫапла вара вӑл пӗтӗм республикӑпа унӑн столицин—Шупашкар хулин промышленноҫне вӑйлӑн аталанма май пачӗ. Чӑваш республикинчи ӗҫҫыннисем питӗ паха шоссе ҫулӗсем хыврӗҫ.

Ҫӗршывра социализмлӑ индустри туса хунине пула, пирӗн ялхуҫалӑхӗ тракторсемпе машинӑсем тата тӗрлӗ йышши удобренисем ҫителӗклӗ таран туянчӗ. Пирӗн ҫӗр ҫинче машинӑпа трактор станцисем пӗрин хыҫҫӑн тепри ӳссе ҫитӗнчӗҫ. Ӗлӗкхи саманара ҫӗре сухапуҫӗ чӑрмаласа шӑйӑрттарнӑ вырӑнта вӑйлӑ тракторсем ӗҫлеме тытӑнчӗҫ, тинӗс пек хумханса выртакан тулӑх уй-хирсем урлӑ комбайнсем, юмахри карапсем пек, ҫӳре пуҫларӗҫ. Совет государстви пирӗн колхознике паха сортлӑ тырпулсем пачӗ, ҫӗрпе тӗрӗс усӑ курма, ҫӗр мӗн пама пултарнине пӗтӗмпех илме вӗрентрӗ. Вара чӑнах та Чӑваш республикин ҫӗнелнӗ ҫӗрӗ ҫинче тырпул тухӑҫлӑхӗ халиччен ӗмӗр курман пек ӳсрӗ! Пирӗн ӗҫхресченӗсене хуҫалӑха пӗрле тытса пыма Совет влаҫӗпе большевиксен партийӗ вӗрентрӗҫ. Ҫапла вара, чӑваш ялне телейлӗ те тулӑх пурӑнӑҫ килсе кӗчӗ. Пирӗн ялхуҫалӑхӗ нумай енлӗ хуҫалӑх пулса тӑчӗ. Колхозла ялта пӗрлешӳллӗ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес, техникӑллӑ культурӑсем акса тӑвас, пахчаҫимӗҫ лартса тӑвас, хурт-хӑмӑр ӗрчетес ӗҫсем те анлӑн сарӑлчӗҫ.

Нумай чӑваш ялӗсенче Ильич лампочки ҫунма тытӑнчӗ, электричество колхоз йӗтемӗсем ҫине, фермӑсене пырса кӗчӗ.

Пирӗн промышленноҫпа ялхуҫалӑхӗ ӳснипе пӗрлех, формипе нацилле, содержанийӗпе социализмлӑ культура та вӑйлӑн ӳссе чечекленчӗ. Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ революци ырлӑхне курнӑ чӑваш ӗҫҫыннийӗсем пӗлӳлӗхпе наука ҫути патнелле пӗтӗм чун-чӗререн туртӑнма пуҫларӗҫ. Республикӑра шкулсен йышӗ нумай ӳсрӗ, вӑтам шкулсемпе училищӑсем, техникумсем ӳссе ҫитӗнчӗҫ, чӑвашсен хӑйсен аслӑ шкулӗсем—педагогика институчӗпе учительсен институчӗ тата ялхуҫалӑх институчӗ—ҫуралчӗҫ. Вӗсем кӗске вӑхӑт хушшинчех халӑх хуҫалӑхӗ валли темиҫе пин специалист вӗрентсе хатӗрлерӗҫ. Аслӑ Октябрьчен тӗттӗмлӗхре вилес пек хӗн-хурта пурӑннӑ чӑваш халӑхӗ халӗ кивӗ саманан ылханлӑ юлашкийӗсене—хутпӗлменлӗхпе трахомӑна пӗтерчӗ.

Халӑха сутта кӑларас ӗҫ валли тухакан ра[сход]сем пирӗн ҫулран ҫул ӳссе пыраҫҫӗ. Иртнӗ ҫулта, гитлерла Германие хирӗҫ пынӑ Отечественнӑй вӑрҫӑн йывӑр вӑхӑтӗнче, халӑха сутта кӑларас ӗҫпе халӑх сывлӑхне сыхлас ӗҫ валли, 1914 ҫулхипе танлаштарсан, 125 хут ытларах укҫа-тенкӗ расходланӑ. Республикӑри кашни пилӗк ҫынтан пӗри шкулсемпе училищӑсенче тата техникумсенче вӗренет.

Советлӑ Чӑваш республики ҫӗрӗ ҫинче клубсемпе библиотекӑсем, кино-театрсемпе хӗрлӗ кӗтессем, пуҫламӑш тата вӑтам шкулсем, ача-пӑча сачӗсемпе яслисем, больницӑсем йышлӑн ӳссе ларчӗҫ.

Совет влаҫӗ чӑваш халӑхне ирӗклӗ пурӑнӑҫ парса ура ҫине тӑратрӗ. Совет влаҫӗн ҫулӗсенче халӑхӑн пурӑнӑҫӗ ӗлӗкхипе танлаштарма ҫук лайӑхланчӗ, унӑн культурӑлӑхӗ ӳсрӗ. Республикӑри халӑхӑн пӗтӗм йышӗ те чылай пысӑкланчӗ.

Чӑваш халӑхӗ хӑйӗн литературипе искусствине, музыкине, театрне аталантарса ҫитӗнтерчӗ.

Тӑватӑ ҫул каярах ҫав мӗнпур аслӑ ҫитӗнӳсем умне пысӑк хӑрушлӑх тухса тӑчӗ. Гитлерӑн урса кайнӑ вӑрӑ-хурахла кӗтӗвӗсем, хӑйсен ҫулӗ ҫинчи хуласемпе ялсене ҫунтарса, хӗрарӑмсене пусмӑрласа, ачасемпе ватӑ ҫынсене вӗлерсе, садсемпе тырпулсене таптаса лӳчӗркесе, пирӗн ҫӗршыв ҫине тапӑнса кӗчӗҫ. Ҫав ылханлӑ йытӑ кӗтӗвӗсем пирӗн Тӑван ҫӗршыври халӑхсене чуралӑха кӗртсе ӳкерме е вӗлерсе пӗтерме хапсӑнчӗҫ.

Тӑван Иосиф Виссарионович, Эсир чӗннипе совет ҫӗршывӗн халӑхӗсем партипе правительство тавра, Сирӗн тавра, пирӗн аслӑ ҫулпуҫӑмӑр тата учителӗмӗр тавра таттах та таччӑнрах пӗтӗҫсе тӑчӗҫ. Вырӑс халӑхӗ ертсе пынипе Совет Союзӗнчи халӑхсен сталинла ҫирӗп йышӗ тӑшмана хирӗҫ Отечественнӑй аслӑ вӑрҫа тухрӗ.

Вӑрҫӑн пур фрончӗсенче те—инҫетри Ҫурҫӗрте, Ленинград патӗнче, Мускав патӗнчи вӑрмансенче, Сталинград урамӗсенче, Днепр ҫинче, Польшӑра, Румынире, Венгрире, Австрире, фашистла тискер кайӑкӑн хура йӑвинче—Берлинра,—пур ҫӗрте те чӑваш халӑхӗн ывӑлӗсем паттӑррӑн ҫапӑҫрӗҫ. Хамӑрӑн тӑван ҫӗршыва—аслӑ Российӑна, хамӑрӑн тӑван Чӑваш республикине вӗсем ҫав инҫетри ҫӗрсенче чыслӑн хӳтӗлерӗҫ. Вӗсем ҫакна ҫирӗп пӗлсе тӑнӑ: вӑрҫӑ чӑваш ҫӗршывӗнчен аякра пулин те, Совет Союзӗн вӗҫӗ-хӗррисӗр чиккинче ӑҫта та пулин лӑпкӑ мар пулсан, чӑваш ҫӗршывӗнче те лӑпкӑ пурӑнӑҫ пулма пултараймасть. Чӑваш халӑхӗн ирӗклӗхӗпе телейӗ вӑл—пуринчен малтан, пӗтӗм ҫӗршывӑн, мӗнпур ирӗклӗ республикӑсен иксӗлми союзӗн ирӗклӗхӗпе телейӗ пулса тӑрать.

Тӑван ҫӗршыва, Сире, хаклӑ Иосиф Виссарионович, асра тытса, чӑваш халӑхӗн ывӑлӗсем тӑшмана хирӗҫ ҫапӑҫӑва кӗнӗ. Вӗсенчен 46 ҫын Совет Союзӗн Геройӗ ятне илме тивӗҫлӗ пулчӗҫ, нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пынӑ кӗрешӳре паттӑррӑн та хастаррӑн ҫапӑҫнӑшӑн 28.000 ҫынна орденсемпе медальсем парса наградӑланӑ. Чӑваш халӑхӗ хӑйӗн паттӑр ывӑлӗсен ҫапӑҫу хирӗнчи ӗҫне ҫавӑн пек пысӑка хурса хакланӑшӑн Сире пӗтӗм чӗререн тав тӑвать. Ҫавӑн пек улӑп-паттӑрсене, пирӗн республикӑра ҫуралса ӳснӗ талантлӑ командирсене Совет Союзӗн Геройӗсене—Боголюбов генерал-полковника тата инженери ҫарӗсен генерал-майорне Петрова, Виноградов, Макаров, Трофимов, Филичкин генералсене пӑхса ҫитӗнтернӗшӗн пирӗн халӑх Сире пӗтӗм чӗререн тав тӑвать.

Ӗмӗрсем иртӗҫ, анчах этемлӗх ҫинче аслӑ Ҫӗнтерӳвӗн чаплӑ ялавӗ ӗмӗр-ӗмӗр ялкӑшса тӑрӗ, ҫав ялава Атӑлтан пуҫласа Эльба шывӗ патне ҫитиччен йӑтса ҫитернӗ паттӑр ҫынсен ячӗсем ӗмӗр-ӗмӗр асра пулӗҫ. Ҫав мухтавлӑ ятсем хушшинче, тӑван Иосиф Виссарионович, Сирӗн хавхалантаракан ятӑр—Ҫӗнтерӳ Маршалӗн ячӗ ҫурхи хӗвел пек ҫиҫсе тӑрӗ!

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑн хаяр кунӗсенче чӑваш халӑхӗ аслӑ вырӑс халӑхӗнчен—пире ертсе пыракан халӑхран—пӗтӗм вӑя хурса ӗҫлеме, йывӑрлӑхсене тӳсме, ҫӗнтерессе ӗненсе тӑма вӗренсе пычӗ.

Пирӗн ҫӗршыва вӑрӑ-хурахла тапӑнса кӗнӗ нимӗҫ захватчикӗсем пирӗн мирлӗ строительство ӗҫне пӑсрӗҫ, анчах пире малалла кайма чараймарӗҫ, чарма та пултарайман.

Совет Союзӗ гитлерла Германие хирӗҫ кӗрешсе тунӑ аслӑ ҫӗнтерӳре пирӗн, Чӑваш республикинчи рабочисемпе колхозниксен тата интеллигенцин, ӗҫӗ те пуррипе эпир телейӗ.

Вӑрҫӑ пыракан районсенчен куҫарса килнӗ фабрикӑсемпе заводсене чӑваш халӑхӗ лайӑх, кӑмӑллӑн йышӑнчӗ. Пирӗн предприятисем пурте фронтшӑн ӗҫлесе пычӗҫ. Хӗрлӗ Ҫар валли хӗҫпӑшал туса парас, татти-сыпписӗр боеприпассем туса кӑларас, фронтра ҫапӑҫакан хамӑрӑн ывӑлсемпе тӑвансем валли тумтирсем парса тӑрас тесе, пирӗн хӗрарӑмсемпе ҫамрӑксем станоксем умне тӑчӗҫ. Ҫавӑн пек вӑй хурса ӗҫленине пула, Чӑваш республикинчи пултра промышленность, вӑрҫӑченхи 1939 ҫулпа танлаштарсан, 1[9..] ҫулта икӗ хут ытларах продукци туса кӑларчӗ, республика столицинчи—Шупашкар хулинчи предприятисем вара вӑрҫӑчченхинчен пилӗк хут ытларах продукци туса кӑларчӗҫ. Якунин юлташ главнӑй инженер пулса ӗҫлекен завод Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденне илме тивӗҫлӗ пулчӗ.

Пирӗн колхозниксемпе колхозницӑсем вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче хастаррӑн ӗҫлерӗҫ. Ӗҫе юрӑхлӑ ҫынсем чылайӗшӗ фронта кайнӑ пулин те, лашасемпе тракторсене Хӗрлӗ Ҫара нумай панӑ пулин те, орденлӑ Чӑваш республикинчи колхозсем вӑрҫӑ кунӗсенче государство умӗнчи хӑйсен обязательствисене пурне те вӑхӑтра тултарса пычӗҫ.

Пирӗн колхозниксемпе колхозницӑсем уй-хирте ҫӗнтерӳ ӗмӗчӗпе хавхаланса ӗҫлерӗҫ, тырпул тухӑҫлӑхне чылай ӳстерчӗҫ. Пӗтӗм тӗнчери пӗррремӗш вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче Чӑваш ҫӗршывӗнчи акакан ҫӗр лаптӑкӗ 100 пин гектар чухлӗ чакнӑ пулсан, Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ ҫулӗсенче вара эпир вӑрҫӑчченхи виҫене сыхласа хӑвартӑмӑр кӑна мар, фронтпа ҫӗршыва тырпул, чӗртавар ытларах парас тесе, техникӑллӑ культурӑсем, ҫӗрулмипе пахчаҫимӗҫсем акса ӑна чылай ӳстертӗмӗр.

Вӑрнар районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан, Елчӗк районӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан, Советски районри «Сеятель», Ҫӗнтӗрвӑрри районӗнчи «Красная Армия», Вӑрмар районӗнчи «Дружба» тата ытти нумай колхозсем те вӑйлӑ тырпул туса илнипе чапа тухрӗҫ. Вӗсем ҫулсеренех гектартан ҫӗршер пӑт е ытларах та тӗштырӑ туса илеҫҫӗ.

Вӑрҫӑ пынӑ тӑватӑ ҫул хушшинче Чӑваш республикинчи колхоз хресченӗсем государствӑна вӑрҫӑчченхи юлашки тӑватӑ ҫул хушшинче панинчен 6,8 миллион пӑт ытларах тырӑ панӑ.

Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе вӑйлатнӑшӑн тата тырпул тухӑҫлӑхне ӳстернӗшӗн республика икӗ хутчен Оборонӑн Государственный Комитечӗн Хӗрлӗ Ялавне илме тивӗҫлӗ пулчӗ. 1940 ҫулхипе танлаштарсан, колхоз фермисенче таварлӑ выльӑхсен йышӗ вӑрҫӑ ҫулӗсенче ҫакӑн чухлӗ ӳсрӗ: майраккалла шултӑра выльӑхсем енӗпе—82 процент, сыснасем енӗпе—60 процент, сурӑхсемпе качакасем енӗпе—219 процент ӳсрӗ.

Республика 25 ҫул тултарнине колхоз хресченӗсем татах та пысӑк ҫитӗнӳсем тунипе кӗтсе илчӗҫ. Июнӗн 7-мӗшӗ тӗлне республика государствӑн ҫураки планне пӗтӗмӗшпех тултарчӗ. СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ «Государствӑн колхозсемпе совхозсенче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли 1945 ҫулхи планӗ ҫинчен» йышӑннӑ постановленире кӑтартса панӑ пысӑк ҫитменлӗхсене пирӗн колхозсем вӑхӑтра шута илчӗҫ те, кӑҫалхи июнӗн 1-мӗшӗ тӗлне фермӑсенчи выльӑхсен йышне ӳстермелли ҫулталӑкри плана пӗтӗмӗшпех тултарчӗҫ. Эпир темиҫе ҫул хушшинче малтанхи хут лашасен йышне ӳстермелли плана та тултартӑмӑр. Выльӑхсен йышне чакармалла мар тӑвас тесе тата выльӑх-чӗрлӗхӗн тухӑҫлӑхне вӑйлӑн ӳстерес тесе, эпир мӗн кирлине пурне те тӑвӑпӑр.

Фронт заказӗсене пурӑнӑҫа кӗртсе пырса Чӑваш республикинчи ӗҫҫыннисем, хӑйсем тунӑ япаласене Хӗрлӗ Ҫар аллине вӑхӑтра ҫитерсе парас тесе, тӑрӑшса ӗҫлерӗҫ. Пирӗн пиншер ҫынсем вӑрмана кайса, вӑхӑтлӑха Донбасс кӑмрӑкӗсӗр тӑрса юлнӑ паровозсем валли вутӑ хатӗрлерӗҫ. Ҫӗршыв пурӑнӑҫӗшӗн питех те паха пулса тӑракан ҫав ӗҫӗн планне тултарнӑшӑн Чӑваш республики Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне илме тивӗҫлӗ пулчӗ.

Тылри нумай патриотсен чаплӑ ячӗсене эпир тивӗҫлипех чысласа мухтатпӑр. Вӑрҫӑ пынӑ ҫулсенче 521 ҫынна Совет Союзӗн орденӗсемпе тата медалӗсемпе наградӑланӑ.

Вӑрҫӑн йывӑр вӑхӑтӗнче чӑваш халӑхӗ вӑя хӗрхенмесӗр ӗҫленине, унӑн патриотла пысӑк туйӑмӗсене нумай тӗслӗхсем ҫирӗплетсе параҫҫӗ. Республикӑри ӗҫҫыннисем Тӑван ҫӗршывӑн оборона фондне 120 миллион тенкӗ ытла укҫа тата государство заемӗсен облигацийӗсене хывнӑ. Эпир, ӑшӑ япаласем 300 пин япала ытла пухса, фронта ӑсатнӑ тата боецсем валли нумай тӗрлӗ посылкӑсем темиҫе вуншар вагон ярса панӑ. Фашистла нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ кӗрешнӗ хамӑр паттӑр воинсен тӑванӗсемпе ачисем ҫинчен те эпир манман. Ятарласа тунӑ фондран ҫар ҫыннисен пиншер ҫемьине укҫа-тенкӗ, тырпул, выльӑх-чӗрлӗх тата ытти япаласем парса пулӑшнӑ. Вӑрҫа пула тӑлӑха юлнӑ ачасене нумай колхозсем хӑйсен вӑйӗпе тимлӗн пӑхса ҫитӗнтереҫҫӗ.

Чӑваш республики 25 ҫул тултарнӑ чаплӑ кун, аслӑ Сталин юлташ, Сирӗн умӑрта ҫапла тупа тӑватпӑр: Тӑван ҫӗршыва вӑрҫӑ кунӗ сурансене хӑвӑртрах тӳрлетсе ҫитерес тесе, хамӑрӑн юратнӑ Тӑван ҫӗршывӑн ҫарпа экономика хӑватне татах та ытларах ӳстерес тесе, эпир, вӑрҫӑ ҫулӗсенчи пекех, ытларах та ытларах вӑй хурса ӗҫлӗпӗр! Эпир пирӗн ҫӗршыври халӑхсен сталинла пӗрлӗхӗпе туслӑхне, хамӑрӑн чи паха ҫитӗнӳ вырӑнне хурса, упраса ҫирӗплетсе пырӑпӑр, пирӗн государствӑра ертсе пыракан вӑй пулса тӑракан аслӑ вырӑс халӑхӗпе чӑваш халӑхӗ хушшинчи туслӑха ҫирӗплетсе пырӑпӑр.

Эпир партипе совет правительствин боевой заданийӗсене пурӑнӑҫа кӗртсе пыма, халӑх хуҫалӑхне аталантарса пыма, хамӑрӑн культурӑна малалла ӳстерсе пыма пӗтӗм вӑя хурса ӗҫлӗпӗр. Колхозсемпе совхозсен уй-хирӗсенчи тырпул тухӑҫлӑхне ӳстерессишӗн, пӗрлешӳллӗ выльӑх-чӗрлӗхӗн йышӗпе тухӑҫлӑхне ӳстерессишӗн эпир малашне те ывӑнма пӗлмесӗр кӗрешӗпӗр. Хаклӑ Сталин юлташ, эпир государство умӗнчи хамӑрӑн мӗнпур обязательствӑсене чыслӑн пурӑнӑҫа кӗртсе пыма Сире сӑмах паратпӑр.

Промышленность продукцийӗ туса кӑлармалли государство планӗсене иртерсе тултарса пырассишӗн, продукци пахалӑхне лайӑхлатассишӗн эпир вӑя хӗрхенмесӗр, большевикла кӗрешӗпӗр.

Отечественнӑй вӑрҫӑ инвалидӗсемпе фронтовик ҫемьисене пулӑшассине вӑйлатӑпӑр, Хӗрлӗ Ҫартан таврӑнакансене ӗҫе вырнаҫма, вӗсене кил-ҫурт лартма тата выльӑх-чӗрлӗх туянма ҫине тӑрсах пулӑшса пырӑпӑр.

Аслӑ Сталин!

Паян чӑваш халӑхӗ Сире мухтаса юрӑ юрлать. Ҫав чаплӑ юрӑ колхозсен анлӑ уй-хирӗсем тӑрӑх, пӗр чарӑнмасӑр ӗҫлекен фабрикӑсемпе заводсем ҫийӗн, вӑрмансемпе шыв-шурсем ҫийӗн янӑрать. Ҫав юрӑ сухаҫӑсемпе ученӑйсен, рабочисемпе артистсен, паттӑр воинсемпе хӗрӳллӗ поэтсен чӗрисенчен шӑранса тухать. Халӑхӑн ҫав юрри телейлӗ Чӑваш ҫӗршывӗ тӑрӑх, ҫурхи шыв пек, сарӑлать. Эсир пире, тӑван атте пек, хӑвӑрӑн чӗре ӑшшипе ӑшӑтса тӑнӑшӑн Сире, аслӑ ҫулпуҫ, чӑваш халӑхӗ пӗтӗм чӗререн вӗҫӗмсӗр тав тӑвать.

Мухтав, аслӑ мухтав Сире, Сталин юлташ!

Сывӑ пултӑр пирӗн хӑватлӑ Тӑван ҫӗршыв—Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗ!

Сывӑ пултӑр Хӗрлӗ Ҫар—халӑхсене ирӗке кӑларакан ҫар!

Сывӑ пултӑр коммунистсен хурҫӑ ҫарӗ—халӑхсене историллӗ ҫӗнтерӳсем тума хавхалантаракан Пӗтӗм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийӗ!

Сывӑ пултӑр пирӗн тӑванӑмӑр аслӑ Сталин!

Ҫырӑва Чӑваш республикинчи рабочисем, колхозниксем, интеллигентсем 315.045 ҫын алӑ пуснӑ.

Ӳкерчӗк ҫинче: Виҫӗ степень Мухтав орденӗсен кавалерӗсем (сулахайран сылтӑмалла): старши сержант А. П. Табаков—Чӑваш АССР-чи Чкаловски районра учитель пулса ӗҫленӗ, старши сержант А. И. Панков—Смоленск облаҫӗнчи Бельск районӗнчи «Крестьянин» ялхуҫалӑх артелӗн колхозникӗ.
Е. КОПЫТА фотоӳкерчӗкӗ (ТАСС фотохроники).

ЧӐВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ
ЧӐВАШ АССР-ӗн ШКУЛӖНЧИ ТАВА ТИВӖҪЛӖ УЧИТЕЛӖН ХИСЕПЛӖ ЯТНЕ ПАРАССИ ҪИНЧЕН

Ачасене коммунистла воспитани парас тата хут вӗрентес тӗлӗшпе калама ҫук паха ӗҫсем тунӑшӑн тата общеcтвӑллӑ пурнӑҫа активлӑн хутшӑннӑшӑн, Чӑваш АССР-ӗ 25 ҫул тултарнӑ ятпа, Чӑваш АССР-ӗн шкулӗсенчи тава тивӗҫлӗ учителӗн хисеплӗ ятне ҫаксене парас:

1. Григорий Герасимович **Гаврилова**—Ҫӗмӗрле хулинчи 2-мӗш номерлӗ вӑтам шкулӑн учительне.
2. Александра Гавриловна **Егоровӑна**—Улатӑрти 10-мӗш номерлӗ вӑтам шкулӑн учительницине.
3. Николай Федорович **Ермишина**—Ҫӗмӗрле районӗнчи Мыслецри ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкулӑн учительне.
4. Евгения Ивановна **Жирновӑна**—Елчӗкри вӑтам шкулӑн учительницине.
5. Серафима Семеновна **Зверевӑна** — Тӑвай районӗнчи Тӗмерти вӑтам шкулӑн директорне.
6. Илья Иванович **Иванова** — Ҫӗрпӳри Педагогика училищин преподавательне.
7. Мария Ивановна **Карандаевӑна** — Хӗрлӗ Чутайри вӑтам шкулӑн учительницине.
8. Вера Ивановна **Козловӑна** — Шупашкарти хӗрачасем вӗренмелли 3-мӗш номерлӗ вӑтам шкулӑн директорне.
9. Иван Григорьевич **Леснова** — Куславкка поселокӗнчи пуҫламӑш шкулӑн учительне.
10. Иустиния Степановна **Павловӑна**—Шӑмӑршӑ вӑтам шкулӑн учительницине.
11. Валентина Ивановна **Ребровскаяна** — Шупашкарти арҫын ачасем вӗренмелли 1-мӗш номерлӗ вӑтам шкулӑн учительницине.
12. Елизавета Прокопьевна **Самаринӑна**—Октябрьски районри Ҫатракассинчи вӑтам шкулӑн учительницине.
13. Феодосия Сергеевна **Сергеевӑна** — Муркаш районӗнчи Сурӑмри пуҫламӑш шкулӑн учительницине.
14. Тамара Григорьевна **Синицинӑна** — Комсомольски районри Аслӑ Чурачӑкри вӑтам шкулӑн учительницине.
15. Наталия Павловна **Скамровӑна** — Улатӑр районӗнчи Соловьевски вӑрман участокӗнчи пуҫламӑш шкулӑн заведующине.
16. Матрена Кузьминична **Тихоновӑна**—Йӗпреҫри вӑтам шкулӑн учительницине.
17. Александра Ивановна **Туймедовӑна**—Шупашкарти хӗрачасем вӗренмелли 2-мӗш номерлӗ вӑтам шкулӑн учительницине.
18. Михаил Харитонович **Харитонова**—Советски районри Шӗмшешри вӑтам шкулӑн учительне.
19. Иван Андреевич **Юдина** — Кувакино районӗнчи Мишукӑварри вӑтам шкулӑн учительне.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ З. АНДРЕЕВА.
Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ИЗМАЙЛОВ.
Шупашкар хули, 1945 ҫулхи июлӗн 6-мӗшӗ.

ЧӐВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ
ЧӐВАШ АССР-ӗнчи МЕДИЦИНА РАБОТНИКӖСЕНЕ ЧӐВАШ АССР-ӗн ТАВА ТИВӖҪЛӖ ВРАЧӖН ХИСЕПЛӖ ЯТНЕ ПАРАССИ ҪИНЧЕН

Халӑх сывлӑхне сыхлас ӗҫре калама ҫук паха ӗҫсем тунӑшӑн, Чӑваш АССР-ӗ 25 ҫул тултарнӑ ятпа, Чӑваш АССР-ӗн тава тивӗҫлӗ врачӗн хисеплӗ ятне ҫаксене парас:

1. Юрий Васильевич **Колмогорова** — Ҫӗмӗрлери санитарипе эпидемиологи станцийӗн врачне.
2. Мария Николаевна **Ермишинӑна** — Ҫӗмӗрлери район больницинчи главнӑй врачне.
3. Михаил Григорьевич **Титова** — судпа медицина экспертизин врачне.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ З. АНДРЕЕВА.
Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ИЗМАЙЛОВ.
Шупашкар хули, 1945 ҫулхи июлӗн 6-мӗшӗ.

ЧӐВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ
ЧӐВАШ АССР-ӗн ИСКУССТВӐСЕН ТАВА ТИВӖҪЛӖ ДЕЯТЕЛӖН ХИСЕПЛӖ ЯТНЕ ПАРАССИ ҪИНЧЕН

Искусство тӗлӗшӗпе калама ҫук паха ӗҫсем тунӑшӑн, Чӑваш АССР-ӗ 25 ҫул тултарнӑ ятпа, Чӑваш АССР-ӗн искусствӑсен тава тивӗҫлӗ деятелӗн хисеплӗ ятне ҫаксене парас:

1. Борис Аркадьевич **Архангельские**—Чӑвашсен Государствӑн Академиллӗ Театрӗн главнӑй художникне.
2. Ольга Петровна **Дальскаяна** — пӗр завод клубӗнчи художествӑллӑ пултарулӑх коллективӗн руководительне.
3. Григорий Алексеевич **Морева** — Чӑвашсен Государствӑн Академиллӗ Театрӗн режиссерне.
4. Леонид Никонорович **Родионова** — Чӑвашсен Государствӑн Академиллӗ Театрӗн художество руководительне.
5. Яков Гаврилович **Ухсая**—писателӗ-драматурга.
6. Григорий Яковлевич **Хирбюе**—композитора, Чӑвашрадиокомитечӗн юрӑ ансамблӗн художество руководительне.
7. Герман Степанович **Лебедева**—композитора.
8. Ольга Александровна **Якубовскаяна** — Луначарский ячӗпе тӑракан Государствӑн Театр Институтӗнчи Чӑваш студийӗн художество руководительне.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ З. АНДРЕЕВА.
Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ИЗМАЙЛОВ.
Шупашкар хули, 1945 ҫулхи июлӗн 6-мӗшӗ.

ЧӐВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ
ЧӐВАШ АССР-ӗн ТАВА ТИВӖҪЛӖ АРТИСЧӖН ХИСЕПЛӖ ЯТНЕ ПАРАССИ ҪИНЧЕН

Театр искусствинче калама ҫук паха ӗҫсем тунӑшӑн, Чӑваш АССР-ӗ 25 ҫул тултарнӑ ятпа, Чӑваш АССР-ӗн искусствӑсен тава тивӗҫлӗ артисчӗн хисеплӗ ятне ҫаксене парас:

1. Михаил Петрович **Аленцева** — Чӑвашсен Государствӑн Академиллӗ Театрӗн актерне.
2. Рона Ивановна **Ананьевӑна** — Чӑвашсен Государствӑн Академиллӗ Театрӗн артисткине.
3. Анфиса Андреевна **Долговӑна**—Чӑвашсен Государствӑн Академиллӗ Театрӗн артисткине.
4. Анна Григорьевна **Казаковӑна** — Чӑвашсен Государствӑн юрӑпа ташӑ ансамблӗн солисткине.
5. Асаф Михайлович **Мудрова**—Чӑвашсен Государствӑн Академиллӗ Театрӗн актерне.
6. Зинаида Михайловна **Павловӑна** — Чӑвашсен Государствӑн юрӑпа ташӑ ансамблӗн солисткине.
7. Мария Ивановна **Симуллинӑна** — Чӑвашсен Государствӑн юрӑпа ташӑ ансамблӗн солисткине.
8. Елена Васильевна **Шорниковӑна** — Чӑвашсен Государствӑн Академиллӗ Театрӗн артисткине.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ З. АНДРЕЕВА.
Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ИЗМАЙЛОВ.
Шупашкар хули, 1945 ҫулхи июлӗн 6-мӗшӗ.

Мухтав Сталина пире телейлĕ пурнăç панăшăн!

Республика 25 çул тултарчĕ

Партипе правительство учитель ĕçне пысăка хурса хаклать. Учитель аллине пулас çамрăк ăрăва коммунистла воспитани парса çитĕнтерес ĕçе шанса панă.

Чăваш çĕршывĕ 25 çул хушшинче палламалла мар улшăнчĕ. Тăван культурăпа искусство вăйлăн аталанчĕ. Çак паха ĕçре учитель те нумай вăй хурса ĕçлерĕ. Çавна шута илсе партипе правительство чылай учительсене орденсемпе медальсем парса наградăларĕ. Эпир, халăх учителĕсем, тунă çитĕнÿсемпе лăпланса ларасшăн мар. Тăван çĕршывăн культурине кулленех аталантарса пырассишĕн малашне татах та тăрăшса ĕçлĕпĕр.

Эпĕ халăха çутта кăларас ĕçре 44 çул хушши ĕçлетĕп. Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче, эпĕ сывлăх начар пулин те, тăрăшса ĕçлерĕм. Тăшмана çĕнтертĕмĕр. Çĕнтерÿ хыпарĕ мана çав тери хаваслантарчĕ. Халăх ырлăхĕшĕн, халăх телейĕшĕн манăн татах та ĕçлес килет.

Н. ПАТОВ,
РСФСР-ăн тава тивĕçлĕ учителĕ.
Анат Чаткас ялĕ, Шăмăршă районĕ.

ПЫСĂК САВĂНĂÇ

Аслă вырăс халăхĕ пулăшса пынипе пула, чăваш çĕршывĕ 25 çул хушшинче кайра пыракан тĕттĕм çĕршывран малти вырăна тухса тăванла ытти республикăсем хушшинче паллă вырăн йышăнчĕ.

Çак 25 çул хушшинче эпĕ çуралса ÿснĕ Ишек ялĕ те палламалла мар улшăнчĕ. Ĕлĕкхи вăхăтра ку ялта чиркÿ кăна пулнă пулсан, халĕ ĕнтĕ кунта вăтам шкул, клуб, больница, ачасен çуртĕ, почта тата ытти учрежденисемпе предприятисем çитĕнсе ларчĕç.

Эпĕ акă 61 çул тултартăм. Çапла пулсассăн та манăн çак телейлĕ çĕршывра татах та пурăнас килет, хамăн мĕн пур пĕлĕве Тăван çĕршывпа чăваш халăхне ÿссе аталанма парас килет.

Çак чаплă уяв çитнĕ ятпа эпĕ паян пĕтĕм чăваш халăхĕпе пĕрле çав тери савăнатăп. Пире телейлĕ пурнăç туса панăшăн партипе правительствăна тата аслă Сталина хĕрÿллĕн тав тăватăп.

Х. ДМИТРИЕВА,
РСФСР-ăн тава тивĕçлĕ учительници.
Ишекри вăтам шкул, Ишлей районĕ.

МАНĂН САВĂНĂÇ

СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ мана «Ача амăшĕ-героиня» ятне парса, «Ача амăшĕ-героиня» орденпа тата СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине парса наградăларĕ.

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче эпĕ фронтран час-часах çырусем илеттĕм: пĕрисем эпĕ награда илнĕ ятпа тав тăватчĕç, теприсем тата манăн ывăлсен адресĕсемпе пурнăçĕ çинчен ыйтса яратчĕç. Эпĕ вĕсене хăйсен тăван амăшĕ пекех ăшă саламлă çырусем яраттăм.

Эпĕ халĕ 62 çула çитрĕм. Хамăн вăрăм кунçул тăршшĕнче эпĕ 10 ача пăхса çитĕнтертĕм. Вĕсенчен 5-шĕ Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче пулса, тăван çĕршывшăн хăюллăн çапăçрĕç. Манăн виççĕмĕш ывăл—Павел Кавказра, Кубаньре тата Крымра тăшмансемпе çапăçса «За отвагу» тата «Кавказа хÿтĕленешĕн» медальсем илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Паян, чăваш халăхĕн аслă уявĕ ячĕпе, эпĕ те ытти чăваш хĕрарăмĕсемпе пĕрлех хĕрÿллĕн савăнатăп. Хамăн ваталăх кунçулĕнче мана çакăн пек пысăк хисепе хунăшăн партипе правительствăна чĕререн тав тăватăп. Чăваш халăхĕн 25 çул хушшинчи çитĕнĕвĕсене курсан, манăн тепĕр хут çамрăкланса ĕçе тăрас килет.

С. СТАРОСТИНА,
Ача амăшĕ-героиня.
Комсомольски район, «Пролетарий» колхоз.

ПУРĂНАХ, ЧĂВАШ ÇĔРШЫВĔ!

Ят тухнисемпе пĕрле эп Çĕрпÿрен çуран уттартăм.
Кăнтăрла кăшт сулăнсассăн ушкăн çитрĕ Апаша.
Шăкăрах чăваш çеç марччĕ—пурччĕ вырăс та, тутар та,
Казахсем те, кавказсем те... Пире кĕтнĕ тамаша.

Çуракм пĕтернĕ майăн апашсем уяв пуçарнă,
Колхозпа та, килсерен те хатĕрленĕ кĕреке.
Хирĕç тухрĕç хĕрупраçĕ, хуйхине кăштах пусарнă
Арсăр ерăм, ватă-вĕтĕ—ан мĕн юлнă тĕреке.

Çавçавах (ăна эс ан пăх!) сухалана, сÿреленĕ.
Районра пĕрремĕш вырăн. Пĕлтĕртен те кайра мар.
«Чăваш марим эпĕр?!» терĕ тăххăрти пĕр шăллĕренĕ,
Пуçĕнче çĕмел пек шлем ун, ывçинче вăрттăн чикар.

...Хирĕç тухрĕç. Сирĕлеççĕ питшăллийĕ, чĕрçиттийĕ.
Витре хăлăпĕ чăнклатрĕ. Ĕрĕхет çĕнĕ сăра.
«Тав сире!» тет председатель—тен, пĕртен пĕр вăйпиттийĕ.
«Сывлăмен-ха, тин йÿçет,—тет яя асламĕш,—тав çара!»

«Таравăт иккен çĕршывĕ, сарлака чĕреллĕ халăх!»—
Теççĕ пурте пĕр çăварлăн, кăшт хĕрсессĕн, кинетех.
Эп те тав курки ĕçетĕп. Чĕнместĕп. Эп мĕн калăп?
Халăха мухтав тусассăн—вăя мана та тивĕтех.

Ман пĕр шухăш, ман пĕр ĕмĕт: йĕрсĕрех çухалас марччĕ,
Тен, мана та пурнăç картĕ, юррăм çĕклĕ халăха.
Çав хăюлăх вăй паратчĕ урăм-сурăм вăрçă-харçă
Ун çинчен мана мантарчĕ, эп каятăп салтака.

Туп тулли колхоз карташĕ. Реттипех кĕрсе ларатпăр.
Тăп-тăр урă кĕрекеçĕ рет хывать сума суса.
«Шăрттанне хисеп тусамăр, чăкăтне çыртарах парăр!»
Тет пĕр сакăр ача амăш, йĕпсепе илсе хурса.

Ĕçтереççĕ те сăйлаççĕ—каварлашнă пурте, калăн:
Кăмăлçах кăрчамассем те, ĕххĕмшăя челĕмçĕсем,
Салам куçлă çĕнĕ çынĕ, йĕнĕр майăр пек туталлă
Хĕрĕсем-çке, ăш çунтармăш, юнвĕретмĕш хĕрĕсем!

Тĕлĕнсе пăхса сăнаççĕ (пуртăрах çав сăнамалăх!)
Белорус хĕрĕ-хĕрарăмĕ, еврей ачи-пăчи.
«Пархатарлă мĕн çĕршывĕ! Вашават иккен ку халăх!»
Тет, вăрçа пула, чăвашăн чыс-сăйне тутаннă çын.

Пехиллорĕç, ырă сунчĕç. «Пĕттĕрех тĕнче хурахĕ!»
Ылханланчĕ йăмра айĕн халăх тарăхĕ, хурри.
Лойтенант камандăларĕ. Чĕкеç куçлă пĕр хура хĕр,
Ман çине питех пăхмасăр, мана сĕнчĕ çул курки.

Ун ятне эп астумастăп, астумашкăн пĕлеймерĕм,
Ыйтаймарăм, каламарĕ, ахăрнех пуль вăтанса.
Унпала аса илетĕп сан сăнна, çуралнă çĕрĕм,
Куçăма эс курăнатăн çамрăк ĕмĕтлĕ таса.

Сан сăнна эп илсе кайрăм, сан çинчен шухăшларăм,
Йывăр-йывăр сехетре те эп йăпантăм санпала.
Çавçавах-ши эс, çĕршывăм, сăрлă-варлă Шупашкарăм,
Тăнăç-канăççăр шывшурăм, муллă Атăлăм?—Кала.

Никама та ют темерĕн, хапăл турăн эс халçемĕн:
Украина юрçисем те, латышсем те сан çинчен
Чунлăн-варлăн асăнаççĕ, кĕвĕлеççĕ çĕнĕ семĕ.
Хурçă пенчĕ пирĕн пĕрлĕх, халь алмаз вăл пур енчен.

Ывăлу-хĕрне эп куртăм, пултаратăп каламашкăн:
Сан ятна вĕсем çĕртмерĕç çĕр суран çапăçура.
Ирĕке иленнĕ халăх (хĕç чуптурăмăр чăвашшăн)
Нихăçан та, никама та пулмĕ,—терĕмĕр,—чура!

Сут çанталăка ишес пек артиллери тупăлатчĕ.
Вилĕме кусран пăхан та—чăмăртатăн пăшала.
А сержант калать! «атьсемĕр, ахăрнех ку пирĕн Лаптев,
Чăвашла юрлать снарячĕ, çĕмĕретпĕр, ан шарла!»

Танк качи шăла çырттарчĕ. Ик чăваш ачи пупле́ççĕ:
«Хăшĕ пулĕ çав Ширманов, çав картин çинчи Энтри?»
— Пĕлейместĕним, мăнтарăн? Чăвашран йăхман пуль эсĕ!
Чи малти, шăллăм, Ширманов, чи питти вăл,—тет тепри.

Асанать юнпа тар кунĕ, карăнать касхи шăналăн.
Тĕлĕретни, тĕлĕрместни, флягăран кăшт шыв çăтса,—
Самолет сĕрлет сумаккăн: «ку—Орлов, ку Амăрткайăк!»—
Тĕтпĕр, плащ-палатка айĕн кайăкла кус ывăтса.

Çук, чăваш ятне çĕртмерĕ ывăлу-хĕрÿ çĕршывăм!
Ӳкермерĕ санăн аслă пехилне хура çĕре.
Ахаль мар эс çитĕнтертĕн танлăн, тÿсĕмлĕн те сыввăн,
Чăнкă Атăл хумĕ çийĕн чăпăлкка туса, пире.

Ахаль мар яту сан юррăн янăра тăрать çав халĕ —
Ленин—Сталин саманийĕн çут хĕвелĕ айĕнче.
Пурăнах, Чăваш уйхирĕ, сĕм вăрманĕ, ешĕл ялĕ,
Йăлăм улăхĕ, шыв шурĕ...—Чăвашла пĕчĕк тĕнче!

Пурăнах, сăнтан сăпайлă, ăспа таран, чунпа анлă,
Сăнавпа шап-шур сухаллă, кăмăлпа ача пекскер!
Пурăнах, кун-çул йĕтемĕ çийĕнче тăпачăлакнă,
Лутăрканнă, шĕкĕлченнĕ, çапах тĕшлĕ те йĕкер.

Пурăнах, ĕçре çуралнă, ĕçпе ĕмĕр ĕмĕрленĕ,
Куç хупсан та виçĕ кунлăх çĕр çине ĕç хăваран!
Сан тару пани ахахăн, сан юну паян мерченĕн,
Çĕнтерÿ пуçкăшăлне эс илемлетрĕн çынпа тан.

Сухаçу та, тимĕрçÿ те, пахчаçу та, пулăçу та,
Юрăçу-кĕнекеçÿ те санăн тытнăччĕ пăшал.
Антăхан тăшман тĕп пулчĕ, пирĕн пурнăç пулĕ çутă,
Хальхинчен ь. çĕршер хут та пулĕ тухăçлă, калкан.

Сан çине ÿнмерĕ бомба, сан куçна касмарĕ тĕтĕм
Сан Ӳтне илеме пусмарĕç, ма тесен сан салтаку
Сталинград вут çумăрне те, Ленинград кахатлăхне те
Кĕрхи Днепр сиввине те—тÿсрĕ саншăн. САНШĂН ку!

Пурăнах, Чăваш çĕршывĕ! Телейÿ (пĕлетни эсĕ?)
Хăвăнтан та пысăк санăн вырăс халăхĕ хÿттинче.
Вăхăт çитрĕ, çĕрйышсемĕр: Пушкина тăван темесĕр,
Малашне пире, пĕлсемĕр, çутах мар çак çут тĕнче.

Тĕнче касрăм сахал мар эп, çитсе куртăм юталла та,
Мĕнлерех хак юррăма ман вĕçлесе парас сире?
Сăмаха пит çĕнлемесĕр, каламашкăн пултаратăп:
Тем тесессĕн те, атьсемĕр, лайăх ХАМĂР Расçейрах!

ПЕТĔР ХУЗАНГАЙ.

Республика уявне пысăк çитĕнÿсемпе кĕтсе илтĕмĕр

Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче пирĕн колхозниксем тырпул тухăçлăхне ÿстерес енĕпе ывăнма пĕлмесĕр ĕçлерĕç. Эпир агротехника мероприятийĕсене тĕрĕс пурнăçласа пынипе пĕрлех, тăпрана вырăнти удобренисемпе кашни çулах ыгларах та ытларах çемçетрĕмĕр. 1944 çулта кăна пирĕн колхозниксем 14.093 лав тислĕк, 105 центнер кĕл, 120 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хире кăларчĕ.

Иртнĕ çул эпир 495 гектар, кĕрхи çĕртме, 338 гектар ирхи çĕртме турăмăр. Пирĕн калчасем кăна мар, çĕртме пусси те çумкурăкĕнчен таса тăрать. Тĕштырăсене лайăх тасатса, яровизацилесе сеялкăпа акнă. Иртнĕ çул эпир тĕштырăсемпе пăрса йышши культурă ене кашни гектартан 115-шер пăта ыхан пухса илтĕмĕр. Вăрлăх участокĕсенче тырă тухăçлăхĕ татах та ытларах пулчĕ.

Тырпул тухăçлăхĕ лайăх пулни выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме те паха условисем туса пачĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана эпир кашни çулах иртгерсе тултарса пынă. Вăрçă çулĕсенче Хĕрлĕ Çара эпир чи лайăх 65 лаша патăмăр. Нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи колхозсене пулăшма 75 пуç тĕрлĕ выльăх ярса патăмăр. Çапла пулсан та пирĕн выльăх шучĕ çулран çулах ÿссе пычĕ. Сыснасен шутне, 1942 çулпа танлаштарсан, виçĕ хут ытла, сурăхсен шутне икĕ хута яхăн ÿстертĕмĕр. Иртнĕ çул хур ферми организацилерĕмĕр, унта халĕ 145 хур пур.

Государство умĕнчи пур парăмсене те срокчен тата ытлашшипех парса пынă. Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче кăна пирĕн колхоз 60.000 пăта яхăн тĕштырă. 17.270 пăт çĕрулми, 848 пăт пахча çимĕç, 2.190 пăт аш-какай, 51.166 литр сĕт, 17 пăт брынза, 34.672 штук çăмарта, 42 пăт çăм тата ытти япаласем те нумай панă. Вăрçă çулĕсенче кăна пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем 1.165.000 тенкĕлĕх государство заемне, 354.000 тенкĕлĕх укçапа япаласен лотерейин билечĕсене çырăнса илчĕç.

Пирĕн колхоз вăрçă çулĕсенче те выльăх-чĕрлĕх усрама кирлĕ çуртйĕр тума пултарчĕ. Эпир 86 лаша, 80 пăру вырнаçмалăх витесем турăмăр. 30 метр тăршшĕ, 7 метр сарлакăш машина лартмалли сарай, кĕрпе арманĕ тата çăнăх авăртмалли çиларманĕ турăмăр. Колхоз правленийĕ, вулав çуртĕ, ял Совет канцелярийĕ вырнаçмалăх çурт лартрăмăр. Авăн çапнă вăхăтра машинăсене электричество вăйне пама тата итем çине çутатма генератор туянтăмăр. Халĕ 40 пуç выльăх вырнаçмалăх вите тăватпăр тата 4-мĕш, 5-мĕш, 6-мĕш бригадăсен витисем тавра карта тытса çавăратпăр.

Пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем вăрçăн йывăр çулĕсенче те тулли пурнăçпа пурăнчĕç. Вăрçă çулĕсенче темиçе вунă хуçалăх ытла çĕнĕ пÿрт лартрĕç. Ĕнесĕр, выльăх-чĕрлĕхсĕр, кайăк-кĕшĕксĕр пĕр хуçалăх та çук.

Пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем хăйсене хăйсем çеллемесĕр ĕçленине пула, Отечественнăй аслă вăрçă пынă çулсенче пирĕн колхоз ялхуçалăхĕнче чаплă çитĕнÿсем тунăшăн икĕ хутчен Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Чăваш республики 25 çул тултарнă тĕле пирĕн колхоз çакăн пек çитĕнÿсем турĕ. Вăл çитĕнÿсене çирĕплетсе малалла татах та пысăкрах çитĕнÿсем тума ĕмĕтленетпĕр.

В. ЗАЙЦЕВ,
Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан Хĕрлĕ Ялавлă колхозăн председателĕ.

Америкăпа Англи çарĕсем Берлина кĕме пуçланă

БЕРЛИН, июлĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Совет çарĕсем хаяр çапăçусем хыççăн йышăннă «Мăн Берлин» районне, СССР, Англи, США тата Франци правительствисем пĕр-пĕринпе килĕшсе татăлнă тарăх, халĕ союзниксем пайласа оккупацилемелле.

Ĕнер иртен пуçласа, малта асăннă килĕшÿре каланă пек, Америка çарĕсен чаçĕсем Берлинăн хĕвеланăçĕнчи районне кĕме пуçланă, вĕсене генерал-майор Паркс ертсе пырать. Вĕсемпе пĕр вăхăтрах «Мăн Берлин» территорине Англи çарĕн чаçĕсем те кĕме тытăннă, вĕсене генерал-майор Лайн ертсе пырать.

Июлĕн 4-мĕшĕнче кăнтăрла Америка çарĕсем йышăнса тăмалли зонăра чаплă церемони пулса иртнĕ. Çав церемони США-н халăх праçникĕ пулса тăракан пĕккама пăхăнмалăх кунĕ ячĕпе пулса иртнĕ. Берлинри Штеглиц районĕнчи казармăсен площадĕнче Америка çарĕсен подразделенийĕсем, çавăн пекех тата праçнике чĕннĕ совет çарĕсен подразделенийĕсем тухса тăнă. Праçникре совет командованийĕн представителĕ, Берлинăн çар комендантчĕн заместителĕ генерал-майор Баринов тата Франци генералĕ Бушен пулнă. Америка флангне чаплă çĕклепĕ хыççăн савăнăçлă салют пулнă—США-ри штатсен хисепĕ чухлĕ 48 хут пĕр харăс пенĕ.

Союзниксен çарĕсем «Мăн Берлин» территорине питĕ йĕркеллĕ кĕреççĕ. Совет командованийĕ çавăнта кĕрекен союзниксен çарĕсене пур майпа та пулăшса пырать.

АНГЛИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ПОЛЬША ХАЛĂХ ПĔРЛĔХĔН ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ ЙЫШĂННИ

ЛОНДОН, июлĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви июлĕн 5-мĕшĕнче çакăн пек пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă: «Пĕрлешÿллĕ Королевствăри Унăн Величествин Правительстви çак кунсенче Варшавăра туса хунă Польша Халăх Пĕрлĕхĕн Вăхăтлăх Правительствин премьер-министрĕнчен официальнăй йĕркепе çакăн пек пĕлтерÿ илнĕ: июнĕн 28-мĕшĕнче Варшавăра Правительство туса хунă, çав Правительство Крымри конференци Польша пирки йышăннă решенисене пĕтĕмпех ырларĕ, тенĕ. Çав пĕлтерÿре премьер-министр Унăн Величествин Правительствипе дипломатиллĕ çыхăнусем пуçласа яма тата пĕр-пĕрин патне посолсен рангĕнче тăракан представительсем яма ыйтнă.

Унăн Величествин правительстви Польша Халăх Пĕрлĕхĕн Вăхăтлăх Правительствине туса хунине саламласа йышăнать, вăл ĕç Крымри конференцире Польша пирки йышăннă декларацире кăтартса панисене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе паха утăм туни пулать.

Пĕрлешÿллĕ Штатсен Правительствипе пĕтĕмĕшпех килĕшсе, Унăн Величествин Правительстви Осубка-Моравские Польша Халăх Пĕрлĕхĕн Вăхăтлăх Правительствине йышăнни çинчен пĕлтернĕ тата ăна Унăн Величествин Правительстви çав çĕнĕрен туса хунă Правительствăпа дипломатиллĕ çыхăнусем пуçласа яма килĕшни çинчен те пĕлтернĕ.

Польша Правительствине йышăннă май Унăн Величествин Правительстви çакна астутарать: Польша пирки Крымра йышăннă решенисенче çакна кăтартса панă: Польша Халăх Пĕрлĕхĕн Вăхăтлăх Правительстви мĕн май килнĕ таран хăвăртрах ирĕклĕ, нимĕн те кансĕрлемен суйлав туса иртterme обязательство илмелле. Суйлавра пурте суйлама пултаракан йĕркепе тата вăрттăн суйламалла. Çав суйлава нацистсене хирĕç кĕрешекен тата демократиллĕ партисем пурте хутшăнма пултармалла, вĕсен кандидачĕсем тăратма та ирĕк пулмалла.

Варшавăна Англи посолĕ пулса ĕçлеме кама ярасси çинчен çак çитес вăхăтрах пĕлтерессе кĕтеççĕ. Унччен Варшавăна мĕн май килнĕ таран хăвăртрах хисеплĕ Роберт Хенкие ĕçри повереннăй пулса ĕçлеме ярĕç, теççĕ».

АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШÿЛЛĔ ШТАТСЕМ ПОЛЬША ХАЛĂХ ПĔРЛĔХĔН ВĂХĂТЛĂХ ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ ЙЫШĂННĂ

ВАШИНГТОН, июлĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Трумэн президент çапла пĕлтернĕ: Пĕрлешÿллĕ Штатсен Правительстви Польша Халăх Пĕрлĕхĕн Вăхăтлăх Правительствине йышăнчĕ, тенĕ. Трумэн тата çакна пĕлтернĕ: Пĕрлешÿллĕ Штатсем хăйсен Польшăри посолĕ пулма Артур Блисс Лэйна лартнă, вăл çак çывăх вăхăтрах Варшавăна тухса каймалла.

КИТАЙ ПОЛЬША ХАЛĂХ ПĔРЛĔХĔН ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ ЙЫШĂННĂ

ЧУНЦИН, июлĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Китай республикин правительстви Польша Халăх Пĕрлĕхĕн Вăхăтлăх Правительствине йышăннă.

АНГЛИРЕ ПАРЛАМЕНТ СУЙЛАВĔ ПУÇЛАННА

ЛОНДОН, июлĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви обозревателĕ Англире паян парламента суйлама пуçлани çинчен пĕлтерет. Обозреватель каланă тăрăх, июлĕн 5-мĕшĕнче ирхине сасăласси çав тери майĕпен пынă, суйлав кунĕнчи пек васкани пулман. Англие пына америкаанецсем çав тери паха суйлав пынине ĕненме те пултарайман.

ДАНИРЕ ТĂШМАНА ХИРĔÇ ПЫНĂ ЮХĂМ ЫЙТНИ

КОПЕНГАГЕН, июлĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). 1944 çулхи июнĕн 30-мĕшĕнче оккупаци вăхăтĕнче Копенгаген хулинче пĕтĕмĕшле забастовка пулнăранпа пĕр çул иртнĕ май кунта пысăк митинг туса иртгернĕ. Митингра 50.000 çын ытла пулнă. Суйĕр министрĕ Альфред Иенсен, «Фри Данмарк» хаçат редакторĕ Элиас Бредсдорф, парламент членĕ Нильсен тата ыттисем те сăмахсем тухса каланă. Пуху йышăннă резолюцире тăшмана хирĕç пынă юхăмăн ыйтăвĕсене татăклăн палăртса хăварнă.

«Нацистсемпе çĕршыври ытти сутăнчăксене тата вăрçă преступникĕсене хăвăрт тата Дани халăхĕн хăрушсăрлăхĕшĕн кирлĕ пек çирĕппĕн туса иртгермелле. Нимĕçсемпе пĕрле ĕçленĕ çынсен тата нацистла помещиксен çĕрĕсене пĕр хĕрхенмесĕр туртса илмелле. Нацистсем майлă пулнă çынсене, наци тĕлĕшпе шанчăклă мар çынсене тата демократие хирĕç пыракан çынсене, вĕсем мĕнле вырăнта ĕçленине пăхмасăрах, государство аппаратĕнчен тасатса кăлармалла. Çарпа полицире те тасату иртгермелле. Министрсемпе аслă чиновниксем оккупацичченх тата оккупаци вăхăтĕнче ĕçленине тĕрĕслеме уйăрнă риксдаг (парламент) комиссийĕ хăйĕн ĕçне тĕплĕн тата хăвăрт туса иртгермелле. Суйлавсем пулса иртнĕ хыççăн çĕнĕрен суйланă риксдаг депутачĕсенчен государство судне туса хума ыйтатпăр. 21 çула çитнĕ çынсене суйлав прави парассине вăраха хăвармалла мар. Ку ыйтăва конституцие улăштарнипе пĕрлех татса памалла. Ландстинга (парламентăн çÿлти палатине) салатса ярса, кĕркуннех ăна çĕнĕрен суйламалла. Кĕркуннех фолькстинга (парламентăн аялти палатине), ландстинга тата коммунальнăй органсене суйламалла».

Лăпкă океан çинчи вăрçă

ЛОНДОН, июлĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешÿллĕ командованийĕн штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, Филиппин утравĕсене пĕтĕмĕшпех тасатса çитернĕ. Çав утравсем çинче вăрçă вĕçленнĕ тесе шутлама пулать. Филиппин утравĕсем çинче японецсен 23 дивизине хирĕç америкăнецсен 17 дивизийĕ кĕрешнĕ. Американецсен Филиппин утравĕсем çинче, вилнисене, аманнисене тата пĕр хыпарсăр пĕтнисене шута илсен, 54.000 çын пĕтнĕ. Филиппин утравĕсем çинче пулнă 450.000 япони салтакĕпе офицерĕнчен, штаб пĕлтернĕ тăрăх, 30.000 çын анчах юлнă.

Борнео утравĕ çинче (Голланди Индийĕ) Австрали çарĕсем Баликпапенăн центри районне йышăннă тата хăйсем йышăннă территорие 13 километра çити сарнă.

Июлĕн 2-мĕшĕнче союзниксен самолечĕсем японецсен Формоза утравĕ çинчи аэродромĕ çине бомбăсем пăрахнă, японецсен 20 самолетне пĕтернĕ.

Пирĕн районăн сăн-сăпачĕ

Тăван республикăна тунăранпа çĕрĕк ĕмĕр иртрĕ.

Çак çĕрĕк ĕмĕр хушшинче Вăрнар районĕ те палламалла мар улшăнчĕ.

Хальхи Вăрнар районĕн территоринче ĕлĕк нимĕнле промышленность та пулман. Хресченсем хăйсене тăранса пурăнмалăх та тырă туса илеймен. Революциччен халăха çутта кăларас ĕç çине те çаврăнса пăхман. 1913 çулта хальхи Вăрнар районĕн территоринче пуçламăш шкулсем пурĕ те 12 кăна пулнă, унта 640 ача вĕреннĕ. Вăл шкулсенче пĕтĕмпе 28 учитель ĕçленĕ. Халăха çутта кăларас ĕç валли ун чухне çулталăкра та 15 пин тенкĕ çеç расходланă пулнă.

Тăван республика 25 çул тултарнă тĕле район тĕпренех улшăнчĕ. Вакăн пурăнакан хресчен хуçалăхĕсем колхозсене пĕрлешрĕç. Районра халĕ 48 колхоз шутланать. Колхозсен уйхирĕсенче МТС тракторĕсемпе комбайнĕсем, молотилкăсем, сеялкăсем, жнейкăсем ĕçлеççĕ. Çаксем ĕнтĕ агротехникăна пурнăçласа пыма та та пысăк тухăçлă тырпул туса илме пур майсене те пареççĕ.

Акăнакан çĕр лаптăкĕ, тырпул тухăçлăхĕ районри колхозсенче çулран çул ÿссе пыраççĕ. 1935 çулта акакан çĕр лаптăкĕ 11.803 гектар пулнă. Кăçал вăл 20.548 гектара çитрĕ.

Агротехникăллă мероприятисене мĕнле пурнăçласа пынине илсен, çакна куратпăр: 1935 çулта кĕрхи çĕртме 4595 гектар сухалана пулсан, 1944 çулта 7780 гектар сухалана. Сортлă вăрлăха 1935 çулта 80,5 процент акнă, 1944 çулта вара 100 процентĕнех сортлă вăрлăх акнă. Сортлă вăрлăх акмалли плана кăçал 115 процент тултарнă. Яровизациленĕ вăрлăх 1935 çулта 152 гектар çеç акнă пулсан, 1945 çулта яровизациленĕ вăрлăх акмалли плана 184 процент тултарнă.

Хире çулсерен ытларах та ытларах вырăнти удобренисем кăларнă. Тислĕк 1935 çулта 23750 тонна кăларнă пулсан, 1944 çулта 132.160 тонна кăларнă. Кăçал уя тислĕк кăлармалли плана 150,2 процент тултарнă.

Çуракине тата ытти ялхуçалăх ĕçĕсене кĕске срокра тата лайăх иртгернине пула, колхозсем пысăк тухăçлă тырпул туса илеççĕ. Районĕпе илсен, тырпул тухăçлăхĕ çакăн пек ÿссе пынă. Тĕштырăсен тухăçлăхĕ 1935 çулта гектартан вăтам шутпа 11,8 центнер, 1942 çулта 14,0 центнер, 1944 çулта 14,6 центнер пулнă.

Уйрăм колхозсенче тырпул тухăçлăхĕ татах та пысăкрах. 7 çул хушшинче ĕнтĕ Хирпуçĕнчи «Победа» колхоз тĕштырăсемпе пăрса йышши культурăсене кашни вăтам шутпа гектартан 14,2 центнер, Анаткас Уравăшри Киров ячĕпе тăракан колхоз 14,2 центнер туса илеççĕ. Ленин орденлă Сталин ячĕпе тăракан колхоз 1944 çулта 617 гектартан 22-шер центнер ытла тырă туса илчĕ.

Вăйлă тырпул туса илсе, колхозсем государствăна тырпул вăхăтра парса тăраççĕ. 1943 çулта колхозсем государствăна кооперации урлă 150.000 пăт тырă сутнă, 1944 çулта планран иртгерсе Хĕрлĕ Çар фондне 30.000 пăт тырпул тата 42.000 пăт ытла çĕрулмипе пахча çимĕçсем пачĕç.

Вăрнар районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсен вăрçă вăхăтĕнчи пархатарлă ĕçне правительство пысăка хурса хаклать. 1944 çулти ялхуçалăх ĕçĕсене кăтартуллăн иртгернĕшĕн района виçĕ хутчен Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне тата укçан преми пачĕç.

Кăçалхи çуракине район 8 кун хушшинче вĕçлерĕ. Плана 11.236 гектар акмалла пулсан, пĕтĕм культурăсене 11.747 гектар акса хăварнă.

Кăçалхи çуракинче пирĕн МТС хăйĕн ĕçĕнче лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕ. Вăл çуркунне тракторпа ĕçлемелли плана 184,6 процент тултарчĕ. Плана пур ĕçсем енĕпе те тата пур бригадăсем те иртгерсе тултарнă. Çураки ĕçĕсене вĕçленĕ хыççăнах МТС ирхи çĕртме тума тытăнчĕ.

Обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе те район начар мар тĕслĕхсем кăтартать. 1935 çулхипе танлаштарсан, 1945 çулти январĕн 1-мĕшне (10 çул хушшинче) лашасен хисепĕ 108 процент ÿснĕ, майракаллă шултăра выльăхсем—385 процент, сыснасен—278 процент, сурăхсен хисепĕ 597 процент ÿснĕ.

Район, республика 25 çул тултарнă ятпа пыракан социализмлă ăмăртура илнĕ обязательствăсене пурнăçлассишĕн кĕрешсе. июнĕн 1-мĕшне 1945 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне иртгерсе тултарчĕ.

Районра фосфорит завочĕ, райпромкомбинат, вăрманпромхоз, лесхоз, чугун çул станцийĕ т. ыт. те пур. Вĕсем çулсерен ÿссе пыраççĕ. Вăрçă вăхăтĕнче çав предприятисем фронта çĕршыва кирлĕ продукцие вăхăтра парса тăчĕç. Çавăн пекех куллен кирлĕ таварсем те туса кăларчĕç, ĕçсыннисен нушисене тивĕçтерсе пырас тесе ĕçлерĕç, ĕçлеççĕ те. Кунсăр пуçне, пирĕн районра кооперацине вырăнти промышленность тата вăрман промышленность предприятийĕсем те пур.

Иртнĕ 25 çул хушшинче халăха çутта кăларас ĕç те ÿссе пычĕ.

Халăха çутта кăларас ĕç валли 1944 çулта 2.159.000 тенкĕ расходланă. Районра паянхи куна 16 пуçламăш шкул, 7 çул вĕренмелли шкулсем 11, вăтам шкулсем 5. Вĕсенче 5.680 ача вĕренет, 284 учитель ĕçлет, вăл шутра—аслă пĕлÿ илнисем 27 çын. Кунсăр пуçне, районра ялхуçалăх техникумĕ, ялхуçалăх вăтам шкулĕ пур. Пĕр социализмлă культура çуртĕ ĕçлет, халĕ агрокультура çуртĕ уçăлать. Ялсенче 19 вулав çуртĕ, 2 клуб, ача сачĕсем 2, ача яслисем 3 ĕçлеççĕ.

Революциччен пирĕн халăх хушшинче туберкулез, трахома тата ытти чирсем те сарăлса пынă. Трахомăпа чирлисен шучĕ 80 процента çитнĕ. Больницăсем, трахпунктсем пулман. 25 çул хушшинче сывлăха сыхлас енĕпе те пысăк ÿсĕмсем тунă. Районра хальхи вăхăтра 2 больница (68 койкăлăх), ачасен пĕр санаторийĕ (150 койкăлăх), 3 врач пункчĕ, 5 фельдшер пункчĕ, 1 акушер пункчĕ, 1 эпидстанци, 19 трахпункт, 1 сĕт кухни ĕçлеççĕ. Трахомăпа чирлисен хисепĕ хытă чакрĕ.

1936 çулта сывлăха сыхлас ĕçе район 183.000 тенкĕ расходланă пулсан, 1944 çулта 821.000 тенкĕ расходланă.

Пирĕн районри ĕçсыннисем Отечественнăй аслă вăрçă пынă вăхăтра Хĕрлĕ Çара пулăшас шутпа Хĕрлĕ Çар фондне 225.000 тенкĕ, танксемпе самолетсем тума 4.542.500 тенкĕ пухса хывнă. Кольцовкăри Ленин орденлă Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ А. Васянин юлташ хăйĕн ывăлĕ летчик валли 100.000 тенкĕ парса самолет илчĕ. Çакăншăн Сталин юлташ ăна телеграмма ярса тав турĕ. Вăл танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тума та 100.000 тенкĕ панăччĕ.

Районри ĕçсыннисем вăрçă çулĕсенче государство заемĕсене те нихăçанхинчен ытларах çыранса илчĕç. 1940 çулта заема 582.150 тенкĕлĕх çырăнса илнĕ пулсан, 1941 çулта 696.350 тенкĕлĕх, 1942 çулта 2.083.500 тенкĕлĕх, 1943 çулта 4.753.600 тенкĕлĕх, 1944 çулта 5.596.000 тенкĕлĕх, 1945 çулта 4.846.000 тенкĕлĕх çырăнса илнĕ.

Пирĕн районри колхозниксемпе колхозницăсем, пĕтĕм ĕçсыннисем пекех, Тăван çĕршывăн хăватне ÿстерессишĕн, вăрçă суранĕсене хăвăрт тÿрлетессишĕн халĕ пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ.

П. ОСИПОВ.
Вăрнар райсовет исполкомĕн председателĕ.

ПĔЛТЕРÿ

Июлĕн 8-мĕшĕнче, ирхине 11 сехетре, Хĕрлĕ Площадьре Чăваш АССР 25 çул тултарнă ятпа Шупашкар хулинчи ĕçсыннисен митингĕ пулать.

Митинга предприятисемпе учрежденисенче ирхине 10 сехет тĕлне пуханмалла. Хĕрлĕ Площаде 10 сехет те 30 минутра тухмалла.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Бессарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретариатăн — 4—26, пропаганда пайĕн — 2—89, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленность пайĕн — 3—97, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, рабселькорсен пайĕн — 0—67, издательства конторин — 0—23.

НТ 03154 Типография №1 Управлени полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2, ф. 6. [illegible] 42 п. п. Тираж 16.000